ЮБИЛЕЙ

# «ЮРĂРА – ЧĔРĔ, ВИЛĔМСĔР ВĂЙ»

НУМАЙ пулмасть çеç эпир чăвашсен малтанхи профессионал композиторĕсенчен пĕри С.М.Максимов çуралнăранпа 110 çул çитнине паллă тунăччĕ. Акă виçĕм кун Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче республика музыка культуринчи тепĕр паллă çыннăн – Ф.П.Павловăн 110 çулне чысларĕç.

Шупашкар районĕнчи Патăрьел ялĕнче кун çути курнă арçын ача 1907 çулта учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренме пуçлать. Унсăр пуçне класра пултаруллă ачасем татах пулнă. Хĕветĕр вара хăйĕн пекех кĕвĕ-çемĕ тĕнчипе питĕ кăсăкланакан Çтаппан Максимовпа çывăх туслашнă. Чăваш шкулĕнчи хорта юрланисĕр пуçне сĕрме купăс калама вĕреннĕ, сăвăсем хайланă, вать çынсенчен авалхи юрăсене çырса илсе илемлетнĕ. Иван Яковлев шкулне 1911 çулта пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренет, тепĕр пилĕк çултан Хусанти тĕн семинарине пĕтерет. 1918-1920 çулсенче çак хуларах Археологи, истори тата этнографи институтĕнче ăс пухать. Композитор пултарулăхне 1930-1931 çулсенче Ленинградри консерваторире туптама тĕв тытать. Анчах йывăр чир ĕмĕте пурнăçа кĕртме памасть. Сочире санаторире сипленнĕ чухне 1931 çулхи çĕртме уйăхĕнче вăхăтсăр çĕре кĕрет. Унти масар çинчех канлĕх тупать.

Иксĕлми талантлă, тĕрлĕ енлĕ аталаннă çыннăмăрăн тăван халăхĕшĕн ĕçлемелле те ĕçлемеллеччĕ. Вăл вилнĕ хыççăн Мускаври консерваторире этнографи уйрăмĕнче вĕренекен тусĕ С.Максимов композици класне куçать. «Федор Павлов питĕ пултаруллă композиторччĕ. Халĕ вăл çук ĕнтĕ. Унăн ĕçне манăн малалла тăсмалла», – çаплах ăнлантарать вăл çак пулăм пирки.

Чăваш музыкипе литературин паллă деятелĕ Ф.П.Павлов çуралнăранпа 110 çул çитнине халалласа ирттернĕ савăнăçлă каçра юбилярăн пултарулăхĕпе пурнăçĕ, ĕç-хĕлĕ çинчен искусствоведени докторĕ М.Г.Кондратьев музыковед каласа кăтартрĕ. Вăл унăн музыкăпа театр искусствинчи çитĕнĕвĕсене палăртрĕ. Федор Павлович çавăн пекех хор дирижерĕ, сĕрме купăсçă, музыка педагогĕ çеç пулман, наци литературипе искусствине те чылай витĕм кӳнĕ. Çапах та ăна ытларах чăваш профессионал музыкине хывакансенчен пĕри тесе хисеплетпĕр терĕ музыковед. Композиторăн еткерĕ питĕ пуян. Кунтах чăвашсен пĕрремĕш симфони музыкине /«Сăрнайпа палнай»/, тĕрлĕ хорсене, юрăсене, халăхăн илемлетнĕ юррисене /«Вĕлле хурчĕ» , «Сĕрен»/ кĕртме пулать.

Ун ячĕпех Шупашкарта чăваш хорне йĕркеленине, музыка шкулне уçнине, музыковедени, театроведени никĕсне хывнине, драматурги чăмăртаннине çыхăнтармалла. 1928-1930 çулсенче вăл Чăваш патшалăх хорĕн дирижерĕ пулнă. Федор Павлов илемлетнĕ «Линккалинкка», «Сăвă», «Пирĕн урам анаталла», «Вĕлле хурчĕ», «Сĕрен», «Туй юрри» тата ыттисем те чăваш хор классики пулса юлнă.

Юбилей концертне композитор 1928 çулта хайланă «Сăрнайпа палнай» балет фантазийĕ уçрĕ. Ăна Чăваш патшалăх академи капеллин симфони оркестрĕ каларĕ.

Кунтах ентешĕмĕрĕн поэзи ăсталăхĕпе те паллашма май килчĕ. Надежда Кириллова артистка Ф.Павловăн «Хитре» сăввине вуларĕ. Вăл çырнă «Ялта» драмăн сыпăкĕпе Çамрăксен театрĕн артисчĕсем паллаштарчĕç. Ентешĕсем – Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелсем те парăмра юлмарĕç. Вырăнти шкулта ачасене паллă композиторăн, музыка деятелĕн пултарулăхне ăша хывса çитĕнтерни куç умĕнчех. Хальхинче ачасем хăйсен ял каччи иртнĕ ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче илемлетнĕ юрăсене шăрантарчĕç, вăл хывнă кĕвĕпе ташларĕç. Сцена çине çавăн пекех Ф.П.Павловăн çывăх тăванĕсем те тухрĕç. Концерт «Сĕрен», «Туй юрри» юрăсемпе вĕçленчĕ. Ытла та мăнаçлăн, çав вăхăтрах питĕ хӳхĕм янăрарĕç вĕсем. Чăваш юрринче пĕтĕм пурнăç тесе ахальтен каламан пулĕ çав. Ф.Павлов хăй акă мĕн çырнă ун пирки: «Юрăра чĕрĕ, вилĕмсĕр вăй упранать... Юрăсемпе кĕвĕсенче – чăвашăн пулас музыкин никĕсĕ».

**Надежда СМИРНОВА.**